• *Хаклав*

# Анатолий Чебанов поэзийĕ ҫинчен

**Чăвашсен ку чухнехи паллă ҫыравҫисенчен пĕри Анатолий Чебанов чи малтанах тăван литературăра драматурги жанрĕпе ĕҫлесе палăрчĕ. Кун пирки эпĕ пĕлтĕр «Чăваш улăпĕ ҫинчен сериал» тишкерӳллĕ очеркра тĕплĕн ҫырса кăтартнăччĕ. /«Ҫыравҫă пултарулăхĕ». Тишкерӳсен пуххи, 2009 ҫул/.**

Унăн «Праски инке хĕр парать» тата «Праски кинеми мăнукне авлантарать» камичĕсем чăвашсен тĕп театрĕн сцени ҫинче вăрăм ĕмĕрлĕ пулчĕҫ.

Ҫав вăхăтрах драматург поэзи каҫалăкĕнче те тухăҫлă ĕҫленине палăртмалла. Ҫӳлерех асăннă хамăн ĕҫре эпĕ Чебанов-поэтăн хăш-пĕр уйрăмлăхне те асăнса хăварнăччĕ. «Ялав» журналта /2003 ҫ., 12 №/ «Кĕвĕленсе тухакан сăнарсем» статьяра ентеш-драматургăн сăввисене тишкерсе хак панăччĕ. Унтанпа вăл поэзире татах та сахал мар ĕҫ турĕ.

А.Чебанов малтанах юрăсем валли сăвăсем ҫырчĕ. Часах вĕсем хăйĕн пьесисенче янрарĕҫ. «Праски инке хĕр парать» камитри юрăсемшĕн Юрий Кудаков композитор Чăваш ҫамрăкĕсен Ҫеҫпĕл Мишши ячĕллĕ премине тивĕҫнĕччĕ. Унăн сăввисене Ф.Лукин, Ю.Григорьев, С.Толстов, Н.Заводскова тата ытти композиторсем юрра хывнă. Юррисен шучĕ вара 250 ҫитнĕ. Вĕсенчен чылайăшне халăх юратса итлет. /«Ăҫта пултăн халиччен?», «Ӳкеҫҫĕ ҫулҫăсем», «Йăмрасем», «Сарă тюльпансем», «Ҫăлтăр ҫунă каҫсенче», «Аса ил-ха, савни», «Лантăшсем» т.ыт.те/.

Поэт е писатель пулас тесен тепĕр чухне литература институтĕ пĕтерни те ҫителĕксĕр. Чи аслă шкул вăл – пурнăҫ шкулĕ. Паллах, «писательсемпе явăҫни» те ҫамрăк таланта ӳсме кирлĕ условисенчен пĕри. Ҫакна эпĕ хам та перифери тунсăхĕнче ĕмĕр тăршшĕпех асаплантнăран лайăх пĕлетĕп. Шăпа пире, Чебановпа иксĕмĕре, паллаштарса ҫывăхлатрĕ. «Праскине» те вăл малтан мана вулаттарнăччĕ. Ҫав пьеса сцена ҫине тухас умĕн пĕр ялтах пурăнма пуҫларăмăр. Ҫапла вара пĕрпĕрин патне тăтăшах пырса ҫӳренĕ. Сăввисене тишкерсе хак пама та ман патах йăтса пыратчĕ. Ҫак йăлана халĕ те тытса пырать вăл. Пĕр ăс – аван, икĕ ăс тата лайăхрах теҫҫĕ. Ҫакăн усси куҫ кĕрет.

Райхаҫатра ĕҫленĕ ҫулсенче эпĕ вунă ытла талантлă ҫамрăка тăван чĕлхене юратма, ҫыравҫă ăсталăхне алла илме пулăшнă. Ун чухне хаҫатра ĕҫлеме журналистсене ятарласа хатĕрлемен. Редакци тĕпелĕнче тертленсех пĕр-пĕринчен ҫырма вĕреннĕ. Манăн вĕренекенсенчен чылайăшĕ халĕ те пичетре ăнăҫлă ĕҫлет. Ҫав шутра Валентина Игнатьева /Тарават/, Ульяновскри «Канаш» хаҫат ҫумĕнчи «Шевле» литпĕрлешӳре вăй илнĕ Н.Ларионов /халĕ хаҫат редакторĕ/, А.Дмитриев-Ырьят поэт тата прозаик, Николай Казаков-Ильминский тавра пĕлӳҫĕ тата ҫут ҫанталăк илемĕ ҫинчен кĕске калавсем ҫыракан прозаик, Лаврентий Данилов поэт, Чăнлă райхаҫатĕнче ăнăҫлă ĕҫлекен Елена Кузьмина, М.А.Сугалов /Серте Мишши/ поэт, Юрий Петров /Аксу/ поэт, журналист тата ыттисем те.

А.Чебановăн сăввисенче юрату лирики те, сатирăпа кулăш жанрĕпе ҫырнисем те, юптарусем те пур. Вĕсенче автор уйрăмах ку чухнехи ял пурнăҫне лайăх пĕлни сисĕнет, вăл ыттисем курманнине асăрхама пĕлет, ҫĕнĕ тĕссем тупать, чĕлхи халăх сăмахлăхне ҫывăх. Сăвăра тата мĕн кирлĕ? Ритм-рифма, ҫĕнĕ сăнар. Сăвă виҫине тытса пыма вĕреннĕха вăл, рифмисене янăравлăрах та тиркесерех тытса пыни пăсмасть. Глаголлă рифмăсемпе май пур таран сахалрах усă курма тăрăшмалла. Ҫитменлĕхсенчен куҫа тăрăнаканни – пĕр япала ҫинчен темиҫе хут ҫырни.

Унăн эпика сулăмĕпе ҫырнă хайлавĕсенче сăвă йĕркисене вăрăм тăсса кайни уйрăмах сисĕнет. «Нарспи» авторĕ Константин Иванов е чăваш поэзийĕн малтанхи чĕкеҫĕ Ваҫҫа Аниҫҫи ҫинчен ҫырнинех илер. Вĕсен биографийĕсенчи илтсе-вуласа пĕлнĕ мĕн пур япалана тĕплĕн каласа кăтартма тăрăшать поэт. Ҫапла вара хайлав сюжечĕ шĕвелет, вулакан чи кирлине уйăрса илеймесĕрех юлать. Ку вăл, паллах, ӳсĕм чирĕ темелле. Пĕтĕмĕшле илсен автор чăваш халăх историне кĕрсе юлнă пултарулăх ҫыннисем ҫинчен юратса ҫырма, вĕсен паха енĕсене палăртма тăрăшать-ха.

Кунсăр пуҫне 100 сонетран тăракан «Патриархăн юлашки кунĕсем» поэма /кам ҫинчен сăмах пыни ятĕнченех паллă/, «Каҫхи шуҫăм» кун-ҫул кĕнеки, 158 сонетран тăраканскер, «Тавтапуҫ сана, аннемĕр» – тепĕр сонет кăшăлĕ. Баллада та пур, «Вутлă ункăра» ятлăскер. Ăна А.Чебанов Чăваш халăх артисткин Нина Михайловна Яковлевăн ашшĕне, вăрҫă паттăрне Михаил Филиппович Филиппова халалланă.

Хăйне ҫывăх театр темине те манса хăварман паллах, «Чаршав уҫăлсан» сăвăсен ярăмне драматургири «хреснашшĕне» – СССР тата РФ халăх артистне Валерий Николаевич Яковлева халалланă.

■ **Анатолий ЮМАН**